Илле Тукташ

**Курасса эп шутламанччĕ**

Курасса эп
Шутламанччĕ
Çакă çутă кунсене!
Паян вуннă…
Чĕрем манчĕ
Иртнĕ йывăр çулсене.
Эпĕр пурте
Астăватпăр
Аслă Юпа çулăмне;
Тĕреклĕнех
Халь шăватпăр
Вунă çулăн çулăмпе.
Паян халĕ
Пур ĕç халăх
Карах тухрĕç урама –
Вут Юпашăн,
Вунă çулшăн
Ĕçлĕх юрри юрлама.
Унччен эс те,
Тен, итленĕ:
Хурăç сăнчăр юррине.
Аслă пуçлăх
Пĕтми Ленин
Пире вăрçа чĕннине.
Аслă пуçлăх
Вилнĕ… Ленин
Пирĕнпе уяв ирттермест…
Анчах манмăп:
Вăл пилленĕ
Капитала çĕнтерме!
Кирлĕ мар вĕт
Суя ĕмĕт, –
Ан та пултăр ун халав!
Хамăрпах вĕт
Пирĕн ĕмĕт –
Юн – ялав!

Паян халĕ
Пур ĕç халăх
Карах тухрĕç урама,
Вунă çулхи
Çут Юпашăн
Ирĕк юрри юрлама.
Çамрăк чунăм,
Эс те савăн,
Вирлĕрех тап, эс, чĕре!
Вунă çулшăн
Выллян, юнăм,
Тĕплĕнех халь, эс вĕре!

*Тукташ, И. Курасса эп шутламанччĕ : [сăвă] / И. Тукташ // Çамрăк хресчен. – 1927. – 7 ноябрь.*